84990

П. А. ЕФРЕМОВ



# БУКВАРЬ

ПРОВЕРЕНО
1959

П. А. ЕФРЕМОВ

Ч(Ч) Чув
Е92

# БУКВАРЬ

*Чăваш АССР*
*Çутĕç министерстви*
*çирĕплетнĕ*

ТŸРЛЕТСЕ ТУХНĂ
ИККĔМĔШ ИЗДАНИ

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1951

Редактор *Н. Т. Васянка.* Тех. редактор *Н. С. Степанов.*
Худ. редактор *В. Ф. Солодовников.*

НТ 04418. Подписано к печати 8/VIII-51 г. Объем 8,22 п. л. + 0,25 вкладка.
Учебно-издательских листов 6 + 0,1 вкладка. Бумага 70×108/16.
Тираж 3.000 экз. Заказ № 2092.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров ЧАССР.
*г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*


ШКУЛ













ш т о о о о о о















Аа

А... а... а... а!







Уу

У... у... у... у... у!







Аа

Уу

Ау, ау

а—у у—а

у—а а—у



Мм

ам

А, а, м, у, а. Ау. Ам.

*ау, уа, м м ам.*

# Аа Уу Мм



Уа!



Ам!



Ум!

| | |
|---|---|
| Ам | Ум |
| Ум | Ам |
| Уа | Ау |
| Ум | Уа |
| . м | а . |
| . м | у . |
| . у | . а |
| . а | . у |

*ам, ау, ум, уа.*





Хх

Ух!

А, а, у, м, х, м, у, х, а, м, х



Ах!



Ух!

| | |
|---|---|
| Ах | ам |
| ух | ум |
| ам | ах |
| ум | ух |
| уа | ау |

*э э с с х х х ах, ух.*



а.!



у.!



а.!



у.!

ау ам уа ум
ах ам ум ух
ух ау уа ах

*ау, уа, ам, ах, ум.*



# Лл

ала



а-ла



у-ла —



ул-ма

| | |
|---|---|
| ал | ма |
| ам | ха |
| ум | му |
| ух | ха |
| ах | ма |

Ма-ла. Ух-ла. Ах-ла.
Ул-ма. Ху-ла. У-ла. А-ла.

*л л л л ала, ула.*



# Шш

ла-ша



Ула ла-ша

ша-ла —

| | |
|---|---|
| Аш | Ма |
| Уш | Ша |
| Ах | Му |
| Ам | Шу |
| Ух | Ху |
| Ум | Ха |
| Уш | Ла |

Ма-ла. Ша-ла. Ха-ма.
Ху-ла. Ух-ла. У-ла ла-ша.

*ı и ш аш, лаша.*

# Рр



ура



хур



Шура: ау!

| | |
|---|---|
| ара | хур |
| ура | мар |
| ала | лар |
| ула | шур |
| ама | хул |
| уру | шар |

Ху-ра ла-ша. У-ла хур.
Шу-ра, лар! Ша-ла лар.







у . .    а . .





х . .    ш . .





х . .    ху . .  . . ша





у . . м    ху . .

# Нн



хуран



ар-ман



Н



Анна

| | | |
|---|---|---|
| ан | ана | Ан-на |
| ун | ану | ма-на |
| на | уна | ар-ман |
| му | ман | ху-ран |
| ну | шан | у-нар |

Шура, шала лар. Анна, лар-ха ма-ла! Ну-ну, ула лаша! Хура лаша ху-ла-ра. Ман ура хура мар. Анна, Шура ху-ла-ра.

*Н н н н ан, ун, уна.*

# Ыы



хыр



ых-ра

## Шура.

| | | |
|---|---|---|
| ыраш | хыр | Шу-ра, ыраш |
| ы-ран | хур | алла! Ыран! |
| шы-ра | ах-ах | Ыра-ша |
| ыр-хан | шы-ра | ал-ла-ма |
| ыр-ла | ых-ра | ан ман! |



Анна, ула ху-ра ыран шы-ра.



# Сс



су-хан



су-хал



с

| | | | |
|---|---|---|---|
| ах | сур | са-на | са-рас |
| ас | сыр | са-ла | сы-рас |
| ух | сум | су-ха | су-рас |
| ус | сул | су-хал | су-нас |
| ху | сар | су-ран | са-лам |
| су | сан | су-хан | сал-ма |

Мана улма.
Са-на сал-ма.
Ан-на-на са-лам.

Ма-на ан ман.
Са-на ма-нас мар.
Усал сунас мар.

*с с с сас сарас, сухан.*

# Çç





## çырла  çурла

| | | | |
|---|---|---|---|
| ус | сыр | су-ха | ça-ран |
| уç | çыр | çу-ха | çыр-ла |
| сар | сум | çур-ла | çу-ран |
| çар | çум | çыр-ма | çум-ра |

Ма-на çы-ру çыр-ма ан ман.
Çы-ру-ра са-лам çыр.
Çул-ла çыр-ла са-хал мар.
Ан-на çыр-ла-ра. Шу-ра ху-ла-ра.
Хур çыр-ма-ра. Çыр-ма ман ум-ра.
Ра-ман у-рам-ра. Çур-ла ман-ра мар.
Ла-ша су-ха-ра.



## а, у, м, х, л, ш, р, н, ы, с, ç.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ум | ха | ула | сар | çыр-ма |
| ас | му | аçу | хыр | хыс-на |
| уç | на | уна | мул | сар-ма |
| ах | çу | ара | лар | çур-ла |
| ус | ма | ула | çын | сых-ла |
| аш | ху | ама | хуç | сал-ма |
| ух | су | ура | хум | çыр-ла |

Ан сар! Ан хуç! Ан çых! Ан сур!



Ма-руç, çы-ру çыр!
Çы-ру çыр-ма ша-ла
лар! Шу-ра, са-лам çыр!



Шу-ра, уру ху-ра!
Уру-на çу! Ал-лу-на çу!
Аван лар! У-ру-на сул-
ла-са ан лар!

*Маруç, çыру çыр.*



ç . . . a




ç . . у



ç . . a



ул . .



с . . . а



. . рма



. . х . л



. . х . н



. . ран



х . . . .



хун . .



çыр . .

# Ăă





## сăрă ăса

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ар | шан | хă-ма | шă-мă | ма-нăн |
| ас | шăн | шă-на | сă-рă | са-нăн |
| ăс | хас | хă-на | нă-рă | у-нăн |
| ан | мар | сă-на | çу-рă | ха-мăн |
| ăн | мăр | çă-ра | шу-рă | ун-шăн |
| аш | шал | хă-ра | вă-рă | çын-шăн |
| ăш | шăл | хă-ла | са-сă | çă-нăх |

Çара ура. Çăра ыраш. Самăр сысна. Сарă сăрă. Хулăн хăма. Çăмлă сурăх. Çăнăх шурă. Хăрăм хура.









сур.х ç.мха н.р. ăм..

ı а а ă ăман, ăса.

# Вв





## вăрман лав

| | | | |
|---|---|---|---|
| вар | ва-ра | са-ва | вăр-ман |
| вал | вă-рă | сă-вă | сă-нав |
| вăл | ву-ла | са-вăл | ху-нав |
| лав | су-лă | ça-ва | а-ван |



Ву-ла-ма аван.
Çыр-ма аван.

Аван вула!
Аван çыр!

Мав-ра ы-раш выр-нă. Ыраш выр-ма çă-мă-лах мар. Ça-вах вăл аван выр-нă. Вăл вара са-вăн-нă.

*ввв вăл вăрман.*

# Ее



Елена



Вера:

## Анне, анне!

| | | |
|---|---|---|
| ан-не | ен-не | çе-рем |
| ум-не | ер-се | çем-çе |
| хыç-не | ер-çес | çум-не |



Анне шала ларнӑ. Анне çумне Елена ларнӑ. Аннерен леш енне Вера ларнӑ. Елена çыру вуланӑ.

е е е ееее анне, енне.

# Ĕĕ





ĕне сĕлĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| ĕне | çĕ-рĕ | çĕр | ĕ-мĕр |
| ĕ-нер | сĕ-лĕ | вĕр | çĕ-мĕр |
| сĕн | çĕ-çĕ | хĕр | сĕм-сĕр |
| вĕç | хĕç | сĕр | хĕ-лĕх |

Хĕр-лĕ ĕне шыв ĕçес-шĕн. Хă-ла лаша сĕ-лĕ-шĕн.

Лашана ĕçĕ-шĕн ус-ра-ççĕ.
Сыс-на-на ашĕ-шĕн ус-ра-ççĕ.
Ĕне-не мĕн-шĕн ус-ра-ççĕ?



ç . . .



ç. р.



с. л.

*е е ĕ ĕ ĕĕĕĕ ĕне, сĕлĕ.*

# Ии







## хир вир Иван Ира

| | | | |
|---|---|---|---|
| си | хир | си-вĕ | си-ре |
| çи | вир | си-мĕс | çил-хе |
| ши | çил | çи-мĕç | ми-хĕ |
| ир | сир | хи-рĕç | вир-лĕ |

Иван вир выр-нă. Иван аван ĕç-ле-нĕ.

Ира çыр-ла çи-нĕ. Хĕр-лĕ çыр-ли аван. Си-мĕс çыр-ли аванах мар. Си-мĕс-си-не ан çи. Хĕр-ли-не ил-се çи.

Хĕлле сивĕ, çулла ăшă.

*и и ир, И И Ира*

# Йй





## йăва    мăй

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ай | май | йĕр | ă-йăр |
| уй | мăй | йĕс | уй-ран |
| ый | вăй | йыш | мă-йăр |
| ей | хăй | йăх | сай-ра |



Çер-çи йă-ва ça-вăр-нă.
Йăви ăш-не çем-çе сар-нă.
Вара лар-са са-вăн-нă.

Йыс-нан йы-шĕ: хăй, ашшĕ, амăшĕ, арăмĕ, виçĕ хĕр, виçĕ ывăл. Йыснан йышĕ миçе çын?









ă . . р    . ĕр    м . . ăр    х . . ра

*й Й йăва, майăр.*

  

с . . .   ç . . .   ы . . .

  

м . . . .   х . . . .   х . . . .

  

ç . . . .   ш . . . ĕ   с . . . л

*Ш Шура, шала лар.*





# Яя

ялав Лява

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ял | я-лав | я-нах | Ва-ня | Аслă уяв. |
| яр | яс-ли | хă-яр | Са-ня | Хĕрлĕ ялав. |
| яв | ня-ня | ха-яр | Ма-ня | Ялан уяр. |
| яш | Ва-ля | у-яр | Ля-ва | Симĕс хăяр. |



няня

Лявана яслине леçнĕ.
Яслире няня ларнă.
Няня Лявана йышăннă.
Вара Лява савăннă.
Яслире аван.

Я я ясли. Я Я Ялав.

# Оо



## Вова    Оля Соня

| | | |
|---|---|---|
| ах | их | Вова: ох! ох! |
| ох | ай | Оля: у-ух! |
| ух | уй | Соня: и-их!— |

Оля, Соня аван ярă-на-ççĕ.
Вĕсем ярăн-ма вĕ-рен-нĕ.
Вова ярăнма вĕрен-мен.
Вова, вĕрен ярăнма!
Вара аван ярă-нăн,
ярăна-ярăна савăнăн.

*СС ООоо Соня, Оля.*

# Юю







юман Юра хăю

| | | | |
|---|---|---|---|
| юр | юрă | хăю | Юлия |
| юс | юман | мăю | Юля |
| юн | юмах | вăю | Юрий |
| юл | юхăм | Ню-ра | Юра |

Юханшыв
Суя юмах
Вăрăм хăю

Хĕлле юр çăвĕ.
Çулла çумăр çăвĕ,
шыв юхĕ.

Нюра юрлама вĕреннĕ.
Вара ялан юрланă.
Юрла-юрла ĕçленĕ.
Юрла-юрла вылянă.
Юрла-юрла савăннă.

*Ю ю юрă Юля.*

# Ӳӳ









сӳс ҫӳҫ сӳре хӳре

| | | | |
|---|---|---|---|
| ӳс | сӳс | ҫӳхе | хĕр-хӳ |
| ус | ҫӳҫ | сӳре | хĕ-рӳл-лĕ |
| уҫ | йӳнĕ | ҫӳре | хӳре |
| йӳҫ | йӳҫĕ | ҫӳле | хӳ-хĕм |

Йӳҫĕ сухан. Нӳрлĕ сыв-лăш. Ҫӳхе хăма. Сарă ҫӳҫ. Хӳхĕм ҫын. Вăрăм сӳс. Йӳнĕ ҫимĕҫ. Ҫӳлĕ ҫӳҫе. Хĕрӳллĕ салам. Ҫӳ-ҫел-лĕ ал-шăл-ли. Сӳс вĕрен.

Лайăх ҫӳре! Ӳсĕм-лĕ вĕрен!

*у ӳ У Ӳ усă Ӳсĕм.*

# Пп







## пура  пăра  йĕп-çип

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| сып | çип | пас | у-па | пӳ-лĕм |
| хып | суп | пур | ша-па | пĕ-лĕш |
| хуп | лап | пыл | ла-па | пĕ-лĕр |
| пуç | лăп | пир | пу-ра | пу-хăр |
| сап | çап | пыр | пă-ра | пă-хăр |
| çуп | çур | пăр | па-ха | ху-пăр |



Йĕп-çип пулсан, çĕлеме пулĕ. Çĕлеме пĕлсен, çĕвĕç пулĕ.

Пирĕн çĕвĕç Симун пур. Вăл ман валли сăхман çĕлерĕ. Вара çĕнĕ сăхманпа савăнса çӳрерĕм.





. . . .



с . . . .



п . . ç .



п . . . .



п . р . н .



в . . . .



п . . . л



. . . .



. ӳ . . .



. . . .



. . . . ш



. . .

Р Р Раман.



Ваня ал-ли-не ва-ра-ла-нă. Амă-шĕ ăна ал-ли-не çума хуш-нă. Вара Ваня аллине çунă.

Нинă-па Вова ву-ла-ма вĕ-рен-нĕ. Нина ву-ла-нă, Вова йĕр-ле-се пынă. Нина аван вуланă. Во-ва вăл вуланине пăхса пынă.



Ман-па пĕр-ле вĕре-не-ççĕ:






Вера, Валя, Вася, Ваня.

Вĕсем лайăх вулаççĕ, çыраççĕ, юрлаççĕ.

*В в Вова, Вера.*

# Тт



тура



турат

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ят | тет | а-тă | та-та | ту-са |
| йăт | тат | у-тă | ту-та | ту-сан |
| ват | тыт | ва-тă | ти-ха | тĕ-мĕ |
| вут | тăм | ву-тă | ти-лĕ | ту-пан |
| шит | тăс | йы-тă | ты-рă | та-пă |
| шут | тус | хы-тă | ти-пĕ | пă-та |

Тӳ-рĕ çул. Ти-пĕ çырма.
Вĕ-тĕ вăр-лăх. Шул-тă-ра ыраш.

Çӳл-те тăри юр-ри ил-тĕ-нет. Итлеме пит аван. Çанталăк уяр. Çил çук. Выляма та пит аван. Петя, тух-ха урама лап-тал-ла выляма.

*Тт Тип, Петя.*



. . .



а . . сем



. . . .



п . . а . . .



п . . . ӑ



п . . . ӑ . . .



ав . . н



а . . . н . . .



ту . . т



т . р . . сем

   

| | | | |
|---|---|---|---|
| пус-ма | хап-ха | çăм-ха | па-рап-пан |
| пуç-лăх | сăп-са | тум-ха | ер-ри-пен |
| пит-лĕх | туп-та | тул-та | тĕп-лĕ-рех |
| тур-пас | хуп-лу | таç-та | са-сар-тăк |



Хĕлипсен хĕр-лĕ ĕне пур. Вăл сĕт-лĕ ĕне. Хĕлип ăна тут-лă çите-рет. Çавăн-па та вĕсен сĕт-çу, уйран, хăйма нумай.



Таня

Таня пит тир-пей-лĕ. Унăн тум-тир те, вĕ-рен-мел-ли ха-тĕр-сем те пит таса, тир-пей-лĕ. Вăл ни-хă-çан та япăх çӳремест. Ăна пурте юра-та-ççĕ.

*Х Х Х Х Хĕлип.*

# Кк





## куккук курак

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ак | кас | кĕр | кук-кук | ку-рак |
| сак | каç | кур | кас-ка | кĕ-рĕк |
| çак | куç | кул | кук-ша | пу-кан |
| çук | кар | кум | тап-кă | ка-пан |

шар, пук, шуç — лак

кĕ, ки, çĕ, çи, сӳ — рĕк

кал, каш, вăл, тул, шал — та

Макар кӳлĕре карас тытнă. Унтан карас шӳрпи пĕçернĕ. Шӳрпи тутлă пулнă. К у к к а н а çиме лартнă. Кукка юратса çинĕ. Вăл Макара тав тунă.

*К курак, куккук.*

## Пирĕн автан.

Пирĕн автан пур. Вăл питĕ хитре. Унăн çĕлĕкĕ хĕрлĕ, сухалĕ те хĕрлĕ. Хӳри кукăр, урисем тапкăчлă. Мăйĕпе хӳри симĕссĕн-кăваккăн йăлкăшаççĕ.

Автан ирпе ирех тăрать. Вăл çунаттисене сарать те шарт çапса илет. Çăварне хытă карса: к и - к и - р и к - к и! авăтать.



Автан тус, автан тус!
Хĕрлĕ çĕлĕк, ылтăн пуç.
Мĕншĕн ытла ир тăратăн?
Мĕншĕн хытă кăшкăратăн?
Мана ирех вăрататăн.



Коля, Катя тата Кира шкула хут вĕренме кайнă. Шкулта вĕсем вулама, çырма, шутлама, картинкăсем ӳкерме вĕреннĕ. Висçĕш те вĕсем лайăх вĕреннĕ.

*К К Коля, Катя.*

# Ку мĕн?



Çырăр: кĕрепле, пакша,
кĕреçе, тилĕ,
пукане, тăмана.

# Чч







мулкач ача хачă

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| чул | чăх | ха-чă | чĕ-рĕ | ча-как |
| чар | чăм | та-чă | чыш-кă | чăл-ха |
| чур | чан | пă-чă | чĕ-лĕ | чĕл-хе |
| чак | чĕн | чă-рăш | чĕ-лĕм | чĕр-не |

Ача чăнкăр-чанкăр тунипе хĕпĕртет. Мулкач чалăш-тĕлĕш сиккелет.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
кунĕ-кунĕпе вĕçетĕн,
хурт-кăпшанкă пухатăн,
чĕппўсене пăхатăн.

Ч ч Хачă Чĕкеç.

# Ээ



### Эрешмен.

Кĕ-тес-ре эреш-мен карти пулнă. Унта шăна пырса лекнĕ. Вара эрешмен ăна тытнă.

Эх, эрешмен, эрешмен,
çип арлама пĕлекен,
çипрен карăм каракан,
шăнасене тытакан.

Эр-не, э-мел, э-тем, эпĕ, эсĕ, эпир, эсир, эреш, элек.

   

.ăрă.  ка.ака  .р.шм.н  .ура.

э < пир / рне  э < сир / мел  э < т.м / пĕ

*Э э Э э Эрешмен.*

# Ьь







вылльăх  супăнь  мăкăнь

хал — халь  мăкăнь
çуйăн — супăнь  мăкăль
сахал — ахаль  кукăль

Вылльăхсен усси: ĕне сĕт парать, лаша туртать, сурăх çăм парать, сысна аш парать, йытă хурал тăрать, кушак шăши тытать.



Кольăн супăнь пур. Вăл супăньпе çăвăнать. Кольăн пичĕ, майĕ, аллисем тап-таса.

Мăкăнь чечекĕ пит илемлĕ. Вăл шурă та пулать, хĕрлĕ те пулать. Мăкăнь вăрри вĕтĕ, тутлă.

*ь ь ь супăнь, вылльăх.*



## Читальня.

Читальнӑра кӗнекесем нумай. Марьен, Кольӑн, Ваньӑн, Ольӑн, Маньӑн, Петьӑн кӗнеке вуласси килнӗ. Вӗсем читальнӑна кайнӑ та кӗнекесем илсе вуланӑ. Вӗсем читальнӑра кӗнекесем вулама питӗ юратнӑ.

### Туппине тупӑр:

Ани шурӑ, вӑрлӑхӗ хура.

Чӗри ҫук,—ӑсӗ пур, ҫынна ӑс парать. (К.... е).

Куҫӗ пур,—хӑй суккӑр. (Хут пӗлмен ҫын.)







## Читальня.

Читальнăра кĕнекесем нумай. Марьен, Кольăн, Ваньăн, Ольăн, Маньăн, Петьăн кĕнеке вуласси килнĕ. Вĕсем читальнăна кайнă та кĕнекесем илсе вуланă. Вĕсем читальнăра кĕнекесем вулама питĕ юратнă.

### Туппине тупăр:

Ани шурă, вăрлăхĕ хура.

Чĕри çук, — ăсĕ пур, çынна ăс парать. (К. . . . е).

Куçĕ пур, — хăй суккăр. (Хут пĕлмен çын.)



*Л л Люся вулать.*

   

мă . . .  йĕ . . .  к . . . .  çы . . .

   

с . . . .  ç . . . .  х . . .  к . . . . . .

   

п . . . .  п . чк .  п . . .  ий .

   

к . . . . .  с . . . .  кĕ . е . . е  ш . . . .

   

к . . . . .  сĕ . . .  ç . . . ш . .  к . нь . .

*Мăйăр, йĕкел, кăмпа.*

## Кайăк.



Хĕвелтухăç хĕрелет.
Кайăк ĕçе тытăнать.
Кунĕ-кунĕпе ĕçлет,
чĕпписене тăрантарать.
Вăл хушăрах йăпăртах
йăви патне вăл ларать,
юрă юрлать, савăнать.



## Шăнкăрч.

Шăнкăр-шăнкăр
шăнкăрчăм,
санăн юрру пит аван.
Юрă майĕпе çунату
вĕл-вĕл туса сулăнать.
Кĕмĕл шăнкрав
сасси пек,
санăн сассу вылянать,
мана тем пек савăнтарать.

Шăнкăрч пирĕн юлташ, çăвĕпех вăл пирĕн пахчасене, уй-хирсене тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсенчен тасатать.

*Шăнкăрч юрлать*

## Кăвакал.



— Нарт-нарт кăвакал,
ăçта каян, кăвакал?
— Шыв хĕррине каятăп.
— Шыв хĕрринче мĕскер пур?
— Унта манăн чĕпсем пур.
— Чĕппӳсемпе мĕн тăван?
— Пулă тытма вĕрентеп,
хурчкасенчен сыхлатăп.

## Хурсем.



Пирĕн хурсем пур. Аçи пуçне каçăртать те: кик! тет. Ами: как! тет. Чĕпписем:
— эх-эх-эх-эх! теççĕ.

Пире, ачасене, курсан, аçи мăйне тăсать, çăварне карать те чшш! тăвать. Вара пирĕн Анюк, хăраса, аяккалла вăшт! тарать. Эпĕ хăрамастăп та, çавах таратăп: вăл сăхать-çке.

М Макар, ан ман.

## Хĕллехи каç.



Уйăх та çутă,
çăлтăр та нумай,
йăлтăр та ялтăр
йăлтăртатаççĕ.
Ак эп килелле
чупса килетĕп.
Шăкăрт та шакăрт
пӳрте кĕретĕп.
Кăмака çине,
асатте патне,
йăпăр та япăр
хăпарса кайрăм.

— Ярсам, асатте,
халапна,—терĕм.
Мана асатте
часах итлерĕ.
— Пĕр халап ярăп.
Эс итле,—терĕ.

Тупмалли юмахсем:

1. Пĕри калаçать,
   иккĕн итлеççĕ,
   иккĕн пăхаççĕ. (ч . . . . , х . . . . , к . .)
2. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă. (м . йă.)
3. Юнĕ пур, чунĕ çук. (п . . . н)
4. Хăй çӳрет, вырăнтан куçмасть.
   (с . . . т, ч . . и)
5. Тулта—нимĕр, шалта—тимĕр.
   (чие, ç . . ĕрт)

*Н Нина çырать.*

# Ёё

## Е, е, Ё, ё, Ĕ, ĕ, э

### Ёлка.

Ёлка, ёлка, ёлка!
Питĕ хитре ёлка!
Йĕри-тавра чечексем,
питĕ нумай теттесем.
Ёлка, ёлка, ёлка!
Ешĕл симĕс ёлка!
Пит илемлĕ тумтирпе
пирĕн умра ларатăн!
Ёлка, ёлка, ёлка!
Питĕ чаплă ёлка!
Ачасене астаран,
пурне те савăнтаран.



Лётчик, самолёт, пулемёт. Лётчик самолётпа вĕçет, вăл пулемётпа тăшмансене перет.

Костя лётчиксен шкулĕнче вĕреннĕ. Халĕ вăл самолётпа вĕçет.

*Е Елена. Ĕмĕт. Ёлка.*

# Фф



Фома

## Ферма.

Фома пичче сысна ферминче ӗҫлет. Фермӑра сыснасем нумай, ҫурисем те нумай. Пурте шап-шурӑ. Фома пичче вӗсене пит юратса пӑхать, таса усрать, вӑхӑтра апат парать, шӑварать.

| | | |
|---|---|---|
| ферма | Фома | фуфайка |
| кофе | Марфа | сарафан |
| форма | Филипп | телефон |
| шарф | Феня | патефон |

Марфа сарафан тата фуфайка тӑхӑннӑ. Тырӑ кӑмпаллӑ пулас-ран вӑр-лӑх-сене фор-малин-па ҫӑвасҫӗ. Фома пичче шарф ҫыхрӗ те фер-мӑна-лла утрӗ.

*Ф ф Фома ферма*

# Цц



1 2 3 4
5 6 7
8 9 0

цирк цифрăсем

## Эпир цирк курни.

Эпир хулана кайсан, цирка кĕтĕмĕр. Цирк-ра упасем, упăтесем, йытăсем вылянине тата ташланине куртăмăр. Упине Мишка тесе чĕнеççĕ. Пĕр йыттине Альфа тесе, теприне — Омега тесе чĕнеççĕ. Альфа цифрăсем паллать.

— Альфа! Виççĕ ăçта? кăтарт! тесен, йытти каланă цифрăна урипе пырса пусать. Цирк-ра тĕлĕнмелли питĕ нумай куртăмăр.

Йытти ункă витĕр сикет. Упи сăмси çине пўске хурса ташлать. Эпир тĕлĕнсе пăхса лартăмăр.

*Ц ц Цирк, цифра.*

# Щщ





щётка

плащ

 Шăл щёткипе шăл тасатаççĕ.

 Тумтир щёткипе тумтир тасатаççĕ.

 Атă щёткипе атă тасатаççĕ.

 Урай щёткипе урай шăлаççĕ.

Ирхине, каçхине шăлна щёткăпа çуса тасат. Шăла щёткăпа тасатмасан, шывпа чӳхемесен, шăл пăсăлать, ыратакан пулать.

Çумăрта плащ тăхăнаççĕ. Плащ витĕр çумăр витмест.

щ Щ щ Щ щ Щётка.

# Миçе?



икĕ к. . . . .   . к. ч. . . .   и. . . . .   п. . п. . .



виçĕ ч. . . ç   . . . . . . . .   . . . т. . . . .   п. . к. . . . .



. . . . . . . .   . . . . . . . . . .   . . . . . . . .   . . . . . . .

а, ар, кал, мун, пан — ча

лар, кар, шăр, пыл, лап — чăк

тур, хур, та — чка

Ы ы Ы ыран. Ç ç Çар

# Зз



Зоя Зина Лиза

Зойӑн сумки ҫӗтӗлнӗ. Зоя ӑна хӑех юсанӑ. Сумка ҫаккине ҫирӗплетнӗ, ҫурӑлнине ҫиппе ҫӗлесе сыпӑҫтарнӑ. Вара Зойӑн сумки ҫӗнӗ пекех пулнӑ.

Зинӑн тутри хӗрри сӳтӗлнӗ. Зина йӗп-ҫип илнӗ те тутри хӗррине хӑех пӳкленӗ. Вара Зинӑн тутри хитре пулнӑ, урӑх сӳтӗлмен.

Лиза пукане валли кӗпе ҫӗлеме тытӑннӑ: кӗпен аркине, ҫаннисене тунӑ, ҫухине тунӑ, тӗрленӗ. Вара пукане ҫине тӑхӑнтартнӑ.

Чӗлхене хӑнӑхтармалли.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| за | зо | зы | зю | за | са |
| са | со | сы | сю | зу | су |
| зу | зе | зи | зя | зо | со |
| су | се | си | ся | зы | сы |

з з З З Зоя, Лиза.

# Жж








Женя журнал этажерка

Женя „Мурзилка“ ятлă журнал çырăнса илнĕ. „Мурзилка“ пит илемлĕ журнал. Унта картинка нумай, лайăх статьясем те нумай.

Кăçал Женя „Мурзилка-сăр“ пуçне тата „Вожатый“ ятлă журнал çырăнса илнĕ. Унăн юлташĕ Зина „Пионер“ журнал илет. „Мурзилка“, „Вожатый“ тата „Пионер“ журнала вĕсем пит юратса вулаççĕ.

**Чĕлхене хăнăхтармалли.**

| | |
|---|---|
| ж-з | з-ж |
| жа | за-за |
| ша | са-са |
| жу | жо-жо |
| шу | шо-шо |
| жо | жу-жа |
| шо | ша-шу |
| же | зи-жи |
| ше | си-ши |
| за | шу-жу |
| са | жу-шу |

э ı с ж журнал

Э І С Ж Женя

# Гг



Галя



Грузовик

### Галя.

Амӑшӗ Гальӑна пукане илсе панӑ. Пукани пит хитре пулнӑ. Ӑна Галя питӗ юратнӑ, Зина тесе ят панӑ. Галя пуканипе выляңӑ, ӑна пӗчӗк грузовик ҫине лартнӑ та туртса ҫӳренӗ, унтан ҫывӑрма вырттарнӑ, ачашланӑ. Галя пуканине аван пӑхса усранӑ.

Пирӗн колхозӑн грузовик пур.
Грузовикпа тырӑ турттараҫҫӗ.

**Чӗлхене хӑнӑхтармалли.**

| | |
|---|---|
| га | гага |
| гу | гугу |
| го | геге |
| ги | зга |
| ге | жгу |
| ка | гра |
| га | гро |
| ха | кро |
| гу | хро |
| ку | гри |

грузовик. Г Галя

# Бб



Боря



Автобус

Борьӑн вылямалли теттесем нумай пулнӑ: автобус, автомобиль, мотоциклет, лаша, йытӑ, кушак. Тӗлӗнмелле пулнӑ: вӗсем пурте, авӑрласан, хӑй тӗллӗн урайӗнче чупса ҫӳренӗ. Ачасем ӑна пӑхса тӗлӗннӗ. Боря питӗ савӑннӑ.

Туппине туп: Чӳречеллӗ — пӳрт мар, кустӑрмаллӑ—урапа мар, чупать—лаша мар.

(А . . . . . с.)

| Чӗлхене хӑнӑхтармалли. | |
|---|---|
| ба | пу |
| бу | бу |
| бо | по |
| бе | бо |
| би | пе |
| па | бе |
| ба | би |

б билет Б Боря.



Д

д

Лида, Федя, Домна Даниловна.

Лидăпа Федьăн амăшне Домна Даниловна теççĕ.

Вăл Ĕç Геройĕ. Унăн икĕ орден, икĕ медаль. Ăна бригадирта ĕçлесе тырпул нумай туса илнĕшĕн çав орденсемпе наградăланă, Ĕç Геройĕ ятне панă. Вĕсем пит савăнса пурăнаççĕ. Часчасах пĕрле ларса радио итлеççĕ, кĕнеке вулаççĕ.

| Чĕлхене хăнăхтармалли. | |
|---|---|
| да | та |
| до | да |
| де | ту |
| ди | ду |
| ду | ти |
| ды | ди |



Ъ



## Колхоз пухăвĕ.

Колхозăн объявлени хăми пур. Унта çĕнĕ объявлени çапнă. Колхоз пухăвĕ пуласси çинчен пĕлтернĕ.

Колхоз председателĕ Мускавра съезд пулса иртни çинчен каласа пачĕ.

Колхоз вутă хатĕрлени çинчен бригадир Кузьмин юлташ пĕлтерчĕ. Хатĕрленĕ вуттине разъезда тата Мăнъяла турттарнă.

ъ ъ ъ разъезд, съезд

# Ъ, Ь

| | | |
|---|---|---|
| мăръе | Мăнъял | съезд |
| тухъя | Çĕньял | разъезд |

## Марье аппа.



Марье аппа колхоз бригадирĕ. Вăл тăрăшнипе унăн бригади тулă нумай турĕ. Гектар пуçне вăтăр-шар центнер туса илчĕ. Çавăнпа та ăна Ленин орденĕпе наградăларĕç тата Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне пачĕç.

Туппине туп: Мăнъял хĕрĕсем тухъяллă (к.лх.з ч.хх.сем). Кам умĕнче ылтăн çăлтăр пур? (Г.р.й у....е).






## Завод.

Заводра рабочисем ĕçлеççĕ. Заводăн çурчĕсем пысăк, çӳлĕ. Вĕсене цехсем теççĕ. Цехсенче машина нумай. Вĕсем пурте çавăнаççĕ, кĕрлеççĕ, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Цехсенче тап-таса, çап-çутă. Рабочисене ĕçлеме пит аван.

Заводăн гудок пур. Вăл гудокпа ирхине те, кăнтăрла та, каçпа та кăшкăртать. Вара рабочисем завода пухăнаççĕ.

Заводра манăн атте ĕçлет. Аппа фабрикăра пир тĕртекен цехра ĕçлет.

*завод, фабрика.*

Çак саспаллисене пурне те паллатăн-и? Вĕсене çырма пĕлетĕн-и?

### Уçă сасăллисем:

Аа, Ăă, Уу, Оо, Ыы, Ии,
Яя, Ее, Юю, Ёё,
Ээ, Ӳӳ, Ĕĕ.

### Хупă сасăллисем:

Мм, Лл, Нн, Рр, Вв, Жж,
Зз, Гг, Бб, Дд, Шш, Сс,
Çç, Хх, Фф, Кк, Пп, Тт,
Цц, Чч, Щщ, Йй.

### Сасăсăррисем:

Ъ (хытă палли).
Ь (çемçе палли).

## Букварь.

Эпир букварь тăрăх саспаллисем вĕрентĕмĕр. Малалла эпир вĕреннĕ саспаллисене йĕркелесе çырнă, ăна алфавит теççĕ. Чăваш алфавитĕнче вăтăр çичĕ саспалли. Эпир вĕсене пурне те паллатпăр, вĕсене вулама та, çырма та вĕрентĕмĕр. Çав алфавита пăхса тухăр, саспаллисен йĕркине астăвăр.

## Çак ӳкерчĕксене йĕркипе каласа тух.






Ҫак сӑмахсене ӳкерчӗксем тӑрӑх майлаштарса ҫырса тух:

*Щётка, ийӗ, звонок, хӑяр, автан, нӑрӑ, ёлка, пукан, жнейка, валашка, йӗкел, ҫӑмарта, цифрӑсем, юс, шӑши, упа, орден, доска, ӑса, кушак, рак, така, сухан, фуфайка, чӗрӗп, ял, ӳпле, лаша, грузовик, булка, ӗне, эмел, мӑлатук, ыраш, ещӗк.*

Сӑмахсен малтанхи саспаллийӗсене уйрӑммӑн ӳкерчӗксем тӑрӑх ҫырса тух.

# АЛФАВИТ.

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз

Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз

Ии Йй Кк Лл Мм

Ии Йй Кк Лл Мм

Нн Оо Пп Рр Сс

Нн Оо Пп Рр Сс

Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф

Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф

Хх Цц Чч Шш Щщ

Хх Цц Чч Шш Щщ

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

## Эпĕ—вĕренекен.

Эпĕ халĕ вĕренетĕп. Манăн халĕ букварь, тетрадь, кăранташ, ручка, перо, линейка пур. Анне мана ҫав вĕренмелли хатĕрсене чиксе ҫӳреме сумка ҫĕлесе пачĕ. Эпĕ хам букваре, тетраде, кăранташа, ручкăна тирпейлĕ тытатăп. Манăн тата тĕслĕ кăранташсем пур: хĕрли, сарри, симĕсси, кăвакки, йăмăххи тата ытти-сем те. Эпĕ вĕсемпе хитре ӳкерчĕксем тăватăп.




## Манăн ĕмĕт.

Манăн лайăх вулама, лайăх ҫырма, лайăх шутлама, лайăх калаҫма, лайăх ĕҫлеме, лайăх пурăнма вĕренесчĕ.

Ваттисем калаҫ: Ҫамрăкла вĕренеймесен, ватăлсан вĕренме хĕн, тенĕ.



## Эпĕ шкула кайни.

Манăн питĕ шкула вĕренме каяс килетчĕ. Анчах мана çичĕ çула çитмесĕр шкула ямарĕç. Эпĕ кулленех, ир çинче, çывăрса тăрсан:

— Анне, эпĕ паян çичче çитрĕм-и, мана шкула кайма юрать-и?—тесе ыйтаттăм.

---

Пĕрре, кĕркуннепе, анне мана калать: Зоя, эсĕ ĕнтĕ сакăр çула кайрăн, шкула кайма юрать. Ыран вĕренме пуçлаççĕ, шкула кайма хатĕрлен, тет. Эпĕ шкула каймалли япаласене: букваре, кăранташа, тетраде каçхинех хатĕрлесе хутăм.

Тепĕр кунне ирех эпĕ таса тумтир тăхăнтăм, çĕнĕ сумка çакрăм та шкула вĕçтертĕм.



Çапла вара эпĕ шкулта вĕренме пуçларăм. Питĕ хĕпĕртерĕм, пĕр кун сиктермесĕр çӳретĕп, отличник пулма тăрăшатăп.

### Сталин ачисем.

Эпир Сталин ачисем
Çĕнĕ пурнăç калчисем.
Пире лайăх çитĕнме
Пире лайăх вĕренме.

## Яланах асту.

Шкула таса, тирпейлӗ тумланса пыр.

Шкула урок пуҫланиччен ҫит. Звонок пулсанах класа ху вырӑнна кӗрсе лар. Урокра тӳрӗ лар, урлӑ-пирлӗ пӑхкаласа, турткаланса ан лар. Учитель вӗрентнине итле. Вӑл хушнине пурне те тӗплӗ, вӑхӑтра туса пыр.

Урок вӑхӑтӗнче учительтен ыйтмасӑр класа кӗме те, класран тухма та юрамасть.

Вӗренмелли хатӗрсене тирпейлӗ усра. Кӗнекесене, тетрадьсене таса тыт. Уроксене вӗреннӗ хыҫҫӑн вӗсене пуҫтарса хур.



## Симӑпа Зина.



Симӑпа Зина шкулта пӗрле вӗренеҫҫӗ. Вӗсем шкула пӗр кун сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ. Уроксене яланах лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Учитель сӑмахӗсене аван итлесе лараҫҫӗ. Шкултан таврӑнсассӑн Сима радио итлет. Хӑш чухне Зина та радио итлеме пырать. Радио тӑрӑх ҫӗнӗ юрӑсем вӗренеҫҫӗ, вӗсене хут ҫине ҫырса илеҫҫӗ.

*Сима радио итлет.*



## Савăнатпăр.



Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр
эпир, совет ачисем.
Пире пурте юратаççĕ,
пире пурте халь саваççĕ.
Пире Сталин юратать,
савăк пурнăç вăл парать.
Учительсем юратаççĕ,
пире савса вĕрентеççĕ.
Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр
эпир, совет ачисем.





*Эпир савăнатпăр.*



## Пирĕн класс.

Пирĕн класс пысăк, çутă. Класра ачасем валли партăсем ларăççĕ. Малта доска, счёт, шкафсем ларăççĕ. Учитель валли сĕтелпе пукан пур. Стенасем çинче картинăсем, карттăсем, таблицăсем çакăнса тăраççĕ.

## Дежурнăй.

Класра пирĕн дежурнăй пур. Вăл класри йĕркесене асăрхать. Черетпе эпир пурте дежурнăй пулатпăр. Класс доскине, сĕтеле, партăсене тасататпăр. Форточка уçса класа уçăлтаратпăр.



Юра Юля Алёша Зоя

## Юрӑпа унӑн тӑванӗсем.

Юрӑпа Юля шкула ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем иккӗш те пионер. Вӗсем хӗрлӗ галстукпа ҫӳреҫҫӗ. Юля — звено вожатӑйӗ. Юра — горнист. Вӑл горн каласа пионерсене сбора пуҫтарать.

Юрӑпа Юльӑн шӑллӗ—Алёша, йӑмӑкӗ—Зоя. Алёша ҫичӗ ҫулта. Вӑл кӑҫал шкулта пӗрремӗш класра вӗренет. Зоя пилӗк ҫулта анчах. Вӑл шкула ҫӳремест, вӑл ҫамрӑк.

Юльӑпа Юра иккӗшӗ те вӗренеҫҫӗ. Вӗсем пятёрка илеҫҫӗ. Алёша та вӗсенчен юласшӑн мар, пит тӑрӑшса вӗренет.

*Зина кӗнеке вулать.*

## Манӑн юлташсем.



Манӑн юлташсем — Вадимпа Боря. Эпир пӗрле шкула ҫӳретпӗр, шкулта та юнашарах ларатпӑр. Вадим ман ҫумра сылтӑм енче ларать.



Эпӗ Вадимпа Борьӑна юрататӑп, вӗсем те мана юратаҫҫӗ.

Эпир пӗрле урок вӗренетпӗр. Уроксене вӗренсе пӗтерсен, кӗнеке вулатпӑр, юмахсем яратпӑр. Тупмаллисене пит юрататпӑр, тупписене ӑмӑртса тупатпӑр.

Хӑшпӗр юмахне кунта ҫырнӑ. Эсир те тупписене тупӑр-ха!

Тупмалли юмахсем:

Пӗри тӑкать, тепри ӗҫет,
виҫҫӗмӗшӗ ӳсет.
(ҫ.м.., ҫ.., ӳ...т...н)

Пӗри шухӑшлать, иккӗн ӗҫлеҫҫӗ, иккӗн ҫӗклеҫҫӗ. (п.., ал...м, ур...м.)

Пӗри калаҫать, иккӗн итлеҫҫӗ,
иккӗн пӑхаҫҫӗ. (ч...., х...., к..)



Хирсенче юр анчах.
Ҫырмара пăр анчах.
Сивĕтет аванах.
Вăл хăҫан пулать?

## Х ĕ л л е.

Кун кĕскелчĕ, ҫĕр вăрăмланчĕ. Хĕвел тухат
те ҫӳлелле хăпармасть, часах пытанать. Пĕвер
кӳлĕри шывсем пăрпа витĕнеҫҫĕ. Пур ҫĕрте т
шап-шурă юр выртать.

Колхозниксем вăрмантан вутă турттараҫҫ
Ачасем шкулта вĕренеҫҫĕ. Пушă вăхăтра вĕсе
йĕлтĕрпе, ҫунашкапа, конькипе ярăнаҫҫĕ.

## Ю р.

Эпир, юрсем, пит ҫăмăл,
ҫил вĕрнине итлетпĕр.
Вĕлтĕртетсе ҫаврăнса,
сиксе вĕҫсе ҫӳретпĕр.

Ҫил-тăвăлтан хăраса,
таҫта-таҫта ҫитетпĕр.
Ăҫта ҫитнĕ, вăл тĕле
шурă ҫитти витетпĕр.

*Хĕлле сивĕ. Кун кĕске*

ÇЫРĂР:



Çерçи, тăрна, тилĕ, улатакка, тăмана, мулкач, пăши, кăвакарчăн, чĕрĕп, шăнкăрч, чана, чарлан.

Çапла çырăр: Тискер кайăксем: пăсара, тилĕ . . .
Вĕçен кайăксем: шăнкăрч, . . . . .

ÇЫРĂР:



Чăрăшсем, . . . . . . . . .



## Хӗлле вӑрманта.

Хӗл килчӗ. Юр ҫурӗ. Ҫуна ҫулӗ пулчӗ.

Колхозниксем вӑрманта вутӑ хатӗрлеҫҫӗ, татаҫҫӗ, ҫураҫҫӗ, купалаҫҫӗ, турттараҫҫӗ.

Вӑрманта тӗрлӗрен йывӑҫ пур: хурӑн, юман, вӗрене, хурама, йӗлме, ӑвӑс, ҫӑка, ҫӳҫе, ҫирӗк, чӑрӑш, хыр, пихта.

Туппине тупӑр:

— Вӗҫет—чӗнмест, выртать—чӗнмест.
Вилет—шавлать, чупать, кӗрлет.
(Юр ҫуни, ирӗлни, юхни).

— Пуртӑсӑр, сӑвайсӑр кӗпер тӑвать.
(П.. ш....).

— Ан тив, ӳкетӗп! (П..).

Çырăр: Кам мĕн тăвать?



Коля . . .  Зоя . . .  Соня . . .



Ваня . . .  Петя . . .  Вера . . .



Костя . . .  Вова . . .  Иван пичче . . .

Хушса çырмалли: пит çăвать, шăварать, çырать, çулать, пуç турать, ярăнать, вулать, вылять, чупать.

Кам вулать? Кам çырать? Кам ярăнать?
Кам шăварать? Кам чупать? Кам утă çулать?



Юрĕ ирĕлет.
Улăхĕ чĕрĕлет.
Кунĕ хушăнать.
Вăл хăçан пулать?

## Çуркунне

Хĕвел хытăрах ăшăтать. Юрĕ ирĕлсех пырать. Кураксем, шăнкăрчсем, тăрисем вĕçсе килеççĕ. Çырмасенче шыв кĕрлесе юхать. Курăк çитĕнет, чечексем çурăлаççĕ.

Ачасем урама çара уран тухаççĕ, лапталла выляççĕ.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ ячĕ ăшăтса,
хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.

Тупмалли юмахсем:

— Шывра путмасть, çĕрте çĕрмест.
(к . . . . к).

— Шывра путмасть, çĕрте путать.
(кр . . . ын).

— Шывра путать, çĕрте путмасть.
(ч . . ).

## Чĕкеçсем.

Пӳрт карнизĕ айĕнче чĕкеç йăви пулнă. Унта чĕкеç чĕпписем ларнă. Вĕсем сарă сăмсисене кăларса чĕвĕлтетнĕ.



Иванпа Павăл иртсе пынă. Павăл чул илет те йăва çинелле перет. Пĕр чĕппи тухса ӳкет. Юрать, вилмест.

Чĕкеçсем хурлăхлăн çуйăхса вĕçеççĕ.

Иван Павăла чарать, урăх пеме памасть. Иван хăвăртрах чĕкеç чĕппине илет те йăвине хăпарса хурать.

Вара чĕкеçсем савăнăçлăн чĕвĕлтетнĕ.

## Чĕкеç юрри.



Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
эреветлĕ, теветлĕ,
хӳри вĕçне туй килнĕ,
Якат Петĕр пăчăнтăр-р-р!





Инкубатор.

## Инкубатор.

Пирĕн колхозăн инкубатор пур. Инкубатор вăл—çăмартаран чĕпĕ кăлармалли.

Пирĕн колхозра инкубаторпа нумай чĕпĕ кăларчĕç. Вĕсене пурне те фермăра уйрăм картара усраççĕ. Вĕсем валли унта ăшăтмалли, çитермелли, шыв памалли вырăн пур.

Манăн анне унта чĕпĕсем пăхать. Унпа пĕрле эпĕ те фермăна час-часах каятăп. Манăн унта пит каяс килет.

Чĕпписем пит нумай. — Пăхса тĕлĕнмелле! Вĕсем шап-шурă, сап-сарă, мамăк çăмхисем пек чупса çӳреççĕ. Ытармалла мар вĕсене!

Тупмалли юмахсем:

Пуçĕ—тура, хыçĕ—çурла. (Ав . . н)

Пĕчĕк кинĕм пичке ăсти. (Ч . х)

## Федя.

Федьăна ашшĕ, сухаран таврăнсассăн, ывăннă лашисене кĕтĕве кайса яма хушнă.

— Асту, лашасем ывăннă, хытă ан хăвала,— тенĕ ашшĕ.

Федя пĕр лаши çине утланнă, теприне çавăтнă та ашшĕнчен уйрăлсанах лашасене сиккипе чуптарса кайнă. Çул çинче бригадир курнă та Федьăна чарнă.

— Ывăннă лашасене çав тери хытă чуптарма юрамасть!—тенĕ вăл. Федьăна намăс пулнă, вăл, киле таврăнсан, бригадир ятланине ашшĕне каланă, ашшĕ умĕнче ӳкĕннĕ. Урăх вара Федя нихçан та ывăннă лашасене хытă хăваламан.

---

Ута хĕрхенекен çуран юлман, теççĕ.

Колхоз лашине пушă кирлĕ мар.

Нимрен ытла колхоз ятне ан пăс.

Кая юлсан, каю шăтать.

Кам ĕçлет, çав çиет; кам ĕçлемест, çав çимест.

Колхозра ватлăх та, яшлăх та пĕр, — пурте савăнса ĕçлетпĕр.

## Упапа этем.

(Юмах).

Пĕрре ĕлĕкрех упапа этем туслашнă. Иккĕшĕ пĕрле çарăк акма шут тытнă, тет.

Упи калать этемне:

— Мана тăрри пултăр ,эсĕ тымарне ил,—тет.

— Юрĕ,—тет этемĕ.

Сухаларĕç, çарăк акрĕç.

Çарăк пулчĕ пит аван.

Этем илчĕ тымарне—чи тутлă çарăкне. Упи илчĕ тăррине—ним сĕтексĕр çулçине.



Курать упа — улталанчĕ вăл. Шухăшлать: текех эпĕ улталанмăп ĕнтĕ, тет.

Тепĕр çулне этемĕ татах калать упине:

— Упа тус, атя каллех иккĕн пĕрле акăпăр, тет.

— Юрĕ,—тет упи,—анчах тăррине халь эсĕ ил, мана тымарне пар,—тет.

— Юрĕ, юрĕ,—тет этемĕ, — эсĕ каланă пек пултăр,—тет.

Акрĕç вĕсем тулă.

Тулли пулчĕ пит аван.

Килĕшнĕ пек уйăрчĕç: этем илчĕ тăррине—кулачăлăх туллине.

Упи илчĕ хăмăлне, хăрса кайнă улăмне.

Тарăхнипе упа вăрманалла кайрĕ пурăнма. Çавăнтан кайран этемпе упан текех килĕшӳ пулман, тет, вара.

## Ваттисен сăмахĕсем.

Мĕн акнă, çавă шăтать, теççĕ.

Турчка пур çинче никам та аллине вута чикмест.

Çын аллинчи кукăль тутлă, тет.

Чавса çывăх та, çыртма çук, теççĕ.

Упа вăйлă та, ăсĕ сахал, теççĕ.

Шухăшламасăр ĕçе ан тытăн.

Çынна сăмахĕ тăрăх мар, ĕçне кура хаклаççĕ.

Ĕçлемесĕр ĕç ӳсĕнмест, теççĕ.

Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.

Çуллахи кун çулталăк хушши тăрантарать, теççĕ.

# Ç а р ă к.

(Ю м а х.)

Пĕр старик çарăк лартнă, тет. Çарăкĕ пулнă пит пысăк. Старик çарăк кăларма пынă, тет. Туртать, туртать,—туртса кăлараймасть, тет.





Старик хăйне пулăшма карчăкне чĕнсе пырать. Карчăк тытать старикрен, старик тытать çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ, тет.



Карчăк чĕнет пĕчĕк хĕрне. Пĕчĕк хĕр тытать карчăкран, карчăкĕ—старикрен, старик—çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ, — туртса кăлараймаççĕ, тет.



Пĕчĕк хĕрĕ чĕнет йыттине. Йытти тытать пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ—карчăкран, карчăкки—старикрен, старикки—çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ, тет.



Йытти чĕнет кушакне. Кушакĕ тытать йытăран, йытти—пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ—карчăкран, карчăкки—старикрен, старикки—çарăкран. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ, тет.



Кушакĕ чĕнчĕ шăшие. Шăшийĕ тытрĕ кушакран, кушакĕ—йытăран, йытти—пĕчĕк хĕртен, пĕчĕк хĕрĕ—карчăкран, карчăкки—старикрен, старикки—çарăкран. Туртрĕç, туртрĕç те, çарăка туртса кăларчĕç, тет.

## Ваттисен сăмахĕ.

Пĕччен сурать—типсех пырать, халăх сурать—кÿлĕ тăвать.



## Комбайн.

Ачасем урамра чупаççĕ. — Комбайн! Комбайн!—тесе кăшкăраççĕ.

Колхоз тырри çинче пĕр пысăк машина кĕрлесе пырать. Вăл вырать, çапать, сăвăрать, тап-таса тыррине арча пекки ăшне тултарать.

Акă грузовик пырса та çитрĕ. Комбайн çинчи таса тырра хăй çине юхтарса илчĕ, вĕçтерчĕ колхоз амбарне пушатма. Ун вырăнне тепĕр грузовик çитсе те тăчĕ.

Çапла вара комбайн пĕр кунта тем пысăкăш хирти колхоз тыррине пуçтарса тирпейлерĕ.

---

**Ыйтусем:** Ачасем мĕн тесе кăшкăрнă? Комбайн мĕн тунă? Грузовиксем мĕн тунă? Комбайн мĕнтен пит усăллă?

Вырать, çапать, сăвăрать, таса тыррине грузовик çине тултарать. Мĕн вăл? (К......)

Хӗвел хӗртет.
Ҫырла пиҫет.
Тырӑ саралать.
Ҫав хӑҫан пулать?



## Ҫ у л л а.

Ҫулла ӑшӑ. Хӗвел хӗртсе пӑхать. Уйсенче тырпул ҫитӗнет. Улӑхра симӗс курӑк ҫитӗнет. Пахчара тӗрлӗ ҫимӗҫ ҫитӗнет.

Ҫулла колхозниксем утӑ ҫулаҫҫӗ, тырӑ выраҫҫӗ, ака-суха тӑваҫҫӗ, авӑн ҫапаҫҫӗ.



Ачасем те ашшӗ-амӑшӗсене пулӑшаҫҫӗ: выльӑхсене пӑхаҫҫӗ, пучах пуҫтараҫҫӗ, лашасемпе ҫӳреҫҫӗ.

Ҫулла колхозӑн садӗнче панулми, слива, груша, хурлӑхан, хӑмла ҫырли, чие, ҫӗр ҫырли ҫитӗнеҫҫӗ.

Колхозӑн пахчинче мӗн ҫитӗнет? Ҫырӑр.

Тупмалли юмахсем:

Ҫулла та симӗс, хӗлле те симӗс. (Ч . . . .).
Йӗтӗр-йӗтӗр-йӗтӗрпи, йӗтӗр тӑрри шерепи.
(С . л .).
Вӗт вӑрман тӑрринче темиҫе пин ҫӑмарта.
(Ви . ).

Çырăр: Кам мĕн тăвать?



... хурсене хăвалать, ... утă çулать,
... улать, ... мулкач тытнă, ... ишет,
... пит çăвать, ... вĕрет, ... ларать,
... татать, ... тырă вырать, ... чупать,
... ўкерет.



## Тулăх тырă-пулă.

Колхоз тăрăшса ĕçлет. Суха-ака ĕçне аван тăвать. Колхозăн тырă нумай пулать.

Лайăх тырра-пулла колхозниксем савăнса пуçтараççĕ. Чи аваннине патшалăха хĕпĕртесе параççĕ. Юлашкине колхоза хăвараççĕ, колхозниксем хăйсене валеçеççĕ.

---

Грузовиксемпе лавсем
Умлă-хыçлă пыраççĕ,
Патшалăха колхозсем
Тĕш тыррине параççĕ.

### Ваттисен сăмахĕ:

Тумлам çине тумлам—кӳлĕ пулать,
Улăм çине улăм—ура пулать,
Пĕрчĕ çине пĕрчĕ—тырă кăшăлĕ пулать.

Ачасем, картинăна пăхăр та мĕн ӳкернине каласа парăр.



Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать.
Пĕрмай çумăр çăвать.
Вăл хăçан пулать?

Кунсем кĕскелеççĕ. Хĕвел ирех тухмасть. Çанталăк сивĕнерех пырать. Сивĕрех çилсем вĕре пуçлаççĕ. Çумăр час-часах пĕрĕхет.

Йывăç çулçисем тăкăнаççĕ. Кайăксем ăшă еннелле каяççĕ.

Колхозниксем авăн çапаççĕ. Пахча çимĕçĕсене пуçтараççĕ: купăста касаççĕ, çĕрулми, йӳç кăшман, сахăр кăшманĕ, хĕрлĕ кăшман, сухан, ыхра кăлараççĕ те нӳхрепе пуçтарса хураççĕ.

Ку хăçан пулать?

Халап.

*Кĕр хитре кĕлтепе, çур хитре чечекпе.*

Пĕл:

*Кĕлти кĕрет, арпи вĕçет,*
*тырри юхать, улăм тухать.* Çавă мĕн?

(Машинăпа авăн çапни.)

*Эпир совет ачисем.*



1. Андрюша. 2. Боря. 3. Галя. 4. Дуня. 5. Гриша. 6. Вера. 7. Таня. 8. Люба. 9. Вовăпа Вася. 10. Зина. 11. Миша. 12. Тимĕрçĕ. 13. Колхозниксем. 14. Серёжа.

Пулă тытать, вутă татаççĕ, туптать, вылять, пит çăвать, вулать, çырать, картинка ӳкерет, шкула каять, чупаççĕ, лаша ӳкерет, картинка пăхать, радио итлет, çыру çырать.



**Владимир Ильич Ленин.**

Владимир Ильич Ленин мĕнпур ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, аслă учителĕ, çывăх тусĕ пулнă. Вăл рабочисемпе хресченсемшĕн тăрăшнă.

Ленин ачасене те пит юратнă. Вăл рабочисемпе хресченсен ачисем аван пурăнччăр, аван вĕренччĕр, тенĕ.

Пур ĕççыннисем те Ленина юратаççĕ, вăл вĕрентнисене ялан асра тытаççĕ.

В. И. Ленин январĕн çирĕм пĕрремĕшĕнче вилнĕ. Унăн ӳчĕ Мускавра мавзолейре выртать. Ăна курма питĕ нумай çынсем пыраççĕ.

Эпир Ленина нихçан та манас çук. Вăл вĕрентнĕ пек пурăнатпăр.



**Иосиф Виссарионович Сталин.**

Сталин — пĕтĕм ĕçхалăхне Ленин çулĕпе ертсе пырать. Вăл пирĕн çулпуç, аслă учитель.

Иосиф Виссарионович Сталин пире савăнăçлă та телейлĕ пурнăç туса пачĕ.

И. В. Сталин—ачасен хаклă юлташĕ.

Сталин —пирĕн кунçул, çут хĕвел, вăй-хăват, мухтавлă çулпуç.

Ленин, Сталин ячĕсем
ĕмĕр пирĕн чĕрере.
Эпир Ленин ачисем,
эпир Сталин ачисем,
пире парти ӳстерет.
Сывă пултăр совет халăхĕ!
Сывă пултăр Аслă Сталин!



## СОВЕТ СОЮЗĔН ГИМНĔ.

Нихçан арканми Союза пĕрлештерчĕ
Пур ирĕк республиксене Аслă Русь.
Сыв пултăр тăван халăхсем çитĕнтернĕ
Пĕр йышлă, хăватлă Советлă Союз!

Чаплă, мухтавлă пул ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăхсен туслăх хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Çут ирĕк-хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
Тăван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пире халăх тивçĕшĕн Сталин ÿстерчĕ,
Çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Вутра паттăр Çар çитĕнтертĕмĕр эпĕр,
Çĕмретпĕр ютран хапсăнан тăшмана!
Телейлĕ кунçулшăн хастар кĕрешетпĕр,
Чапа кăларатпăр Тăван Çĕршыва!

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх мухтавĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Цена 2 р. 10 коп.


П. А. ЕФРЕМОВ

БУКВАРЬ

(пробный выпуск)

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ

ЧЕБОКСАРЫ — 1951

## Касса кӑлармалли саспаллисем

| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| А | А | а | а | а | Н | Н | н | н | У |
| Х | х | х | Р | р | р | М | м | м | м |
| Т | т | т | П | п | п | С | с | с | Ы |
| ш | ш | Л | л | л | Ӑ | ӑ | ӑ | В | в |
| и | Е | е | е | Ç | ç | ç | Ĕ | ĕ | ĕ |
| Э | э | Й | й | Я | я | я | О | о | о |
| Ю | ю | ь | ь | Ӳ | ӳ | Ф | ф | Д | д |
| б | Г | г | г | Ж | ж | ж | Ц | ц | ц |
| щ | ъ | ъ | . | , | - | — | ! | ? | : |

Чӑвашгосиздат, Шупашкар. 1951 çул. Букварь çумне хушса кӑларнӑ.